26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
28
ВЫРСАРНИКУН
68(6305) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ялсовет исполкомĕсен председателĕсен республикăри канашлăвĕ

Мускав, Кремль

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Орденлă Чăваш республикинчи ялсовечĕсен председателĕсен канашлăвĕ Сире, ĕççыннисен аслă çулпуçне тата учительне, социализм çĕршывĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховнăй Главнокомандующине, Совет Союзĕн Маршалне, большевикла хĕрӳллĕ салам ярать.

Эпир çуракине хатĕрленсе ирттерес тапхăрта ялсовечĕсем умĕнче тăракан задачăсене сӳтсе-явма пухăнтăмăр.

Эсир, Сталин юлташ, çĕршывпа фронт валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, пахча-çимĕçсем тата промышленность валли чĕртавар пама хушнисене пурнăçа кĕртсе пырса, орденлă Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем иртнĕ ялхуçалăх çулне организованно вĕçлерĕç, тырпул тухăçлăхне ӳстермелли, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарчĕç тата государствăна тырпул пĕтĕмпех парса татрĕç. Кашни гектартанах вăтам шутпа 13,5 центнер тырă туса илчĕç. Çурхи культурăсем акăнакан çĕр лаптăкне 16 пин гектар, кĕрхи тырăсем акăнакан çĕр лаптăкне 31 пин гектар чухлĕ анлăлатнă. Çĕршер колхозсем кашни гектартан 100-шер пăт тырă туса илчĕç. Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тунă ăнăçусемпе хавхаланса, колхозлă хресченсем фронта пулăшассине пур майсемпе те вăйлатса пыраççĕ. Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем перекетленĕ укçа-тенке боевой самолетсемпе танксем тума 65 миллион тенкĕ ытла хыврĕç, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне хăйсен запасĕнчен 120 пин пăт ытла тырă, аш-какай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем нумай пачĕç.

Çак хисеплĕ ĕçре ялсовечĕсем, государство власĕн ялти органĕсем пулса, пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăчĕç. Вĕсем колхоз производствин пур ĕçĕсене те хутшăнаççĕ, колхозниксен массине вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерме мобилизацилеççĕ, уйхир ĕçĕсене мĕнле пахалăхпа тата мĕнле срокра туса ирттернине, государство умĕнчи обязательствăсене мĕнле тултарнине сăнаса тăраççĕ, колхозсене практикăллă пулăшу параççĕ тата ялти нумай енлĕ пĕтĕм ĕçе пуçарса пыраççĕ. Нумай депутатсемпе ялти активистсем фронта кайрĕç пулин те, ялсовечĕсем хăйсен ĕçне вăйсăрлатмарĕç, партипе правительствăн постановленийĕсене хăвăртрах та лайăхрах пурнăçлама тытăнчĕç.

Акă, сăмахран, Шупашкар районĕнчи Шăмăрш ялсоветне илер. Унăн председателĕ пулса Демянов юлташ ĕçлет. Çак ялсовечĕ активпа лайăх ĕçлесе пырать. Депутатсем пурте партипе правительствăн решенийĕсене колхозниксене ăнлантарса парас тата вăл решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çак ялсоветĕнчи 4 колхоз ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç, пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарчĕç тата çуракине лайăх хатĕрленсе çитрĕç.

Анчах та Шăмăрш ялсовечĕ пек пур ялсовечĕсем те ĕçлеймеççĕ-ха. Пирĕн ĕçре халĕ çитменлĕхсем нумаййине эпир ăнланатпăр.

Пирĕн задача çакăнта пулать: ялсовечĕсене пурне те малта пыракансем пек ĕçлекен тумалла, вĕсен тавра ялти пĕтĕм актива пĕрлештермелле, колхозсен руководителĕсене кăтартусем, сĕнӳсем парса, опытсемпе паллаштарса, хамăрăн административнăй влаçпа усă курса кулленех пулăшассине организацилемелле.

Çураки пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Килес çуракинче пысăк йывăрлăхсем пулма пултараççĕ. Çав йывăрлăхсене çĕнтеретпĕр тесе, çуракине агротехникăллă лайăх срокесенче, пысăк пахалăхпа ирттеретпĕр, çапла майпа пысăк тухăçлă тырпул туса илме çирĕп никĕс хывса хăваратпăр тесе, эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр. Колхоз стройĕн иксĕлми вăй-хăвачĕ, колхозлă хресченсен ĕçри пуçарулăхĕ тата политикăллă активлăхĕ калама çук вăйлăн ӳсни, вĕсем нимĕç захватчикĕсене çĕнтерес тесе мĕн пуррине йăлтах пама хатĕр тăни пире хамăрăн задачăсене пурнăçа кĕртме шанăç парать.

Пирĕн хальхи тĕп задача — çуркунехи уйхир ĕçĕсене тума пĕтĕмпех хатĕрленсе çитесси тата вăл ĕçсене отлично туса ирттересси пулса тăрать. Пирĕн тивĕçлĕх — çуракине хатĕрленсе ирттерес ĕçе оперативлă ертсе пырасси, колхозсен ĕçне кулленех тĕрĕслесе тăрасси, вĕсене пулăшасси пулать. Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракине колхозсем пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе кĕтсе илччĕр тесе, ака ĕçĕсем чăнчăнах вăрçă вăхăтĕнчи пек пулса ирттĕр тесе пирĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлес пулать.

Ялсовечĕн хальхи кунсенче кĕрешӳ штабĕ пулса тăрас пулать, çуракине хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе пур ĕçсене те организацилесе ертсе пырас пулать. Эпир çуракине хатĕрленсе ирттерес пысăк ĕçе тĕплĕн туса пыма пулса вăл ĕçри çитменлĕхсене çирĕп алăпа тыткаласа вăхăтра сирме пулса, сăмах паратпăр.

Республикăри канашлура хамăрăн пысăк задачăсене сӳтсе-явнă хыççăн эпир çуракине тата пĕтĕм ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса ирттерессишĕн, ялсовечĕсен ĕçне лайăх йĕркелесе ярассишĕн республикăри ялсовечĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса яма йышăнтăмăр, хамăр çине конкретнăй обязательствăсем илтĕмĕр. Ялхуçалăхне малалла вăйлатса пырас тĕлĕшпе эпир СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли план çинчен» йышăннă постановленине тĕпе хурса ĕçлĕпĕр. Эпир колхозсене çураки валли фронтри пек хатĕрлесе çитерме, ялхуçалăх культурисем акас тĕлĕшпе государство панă плана, тырпул тухăçлăхне ӳстермелли, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртме пулатпăр, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли пĕтĕм плана вăхăтра тултармалла тăватпăр, колхозсем, колхозниксем тата единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна тӳлемелли пур парăмсене те вăхăтра пурнăçа кĕртмелле тăватпăр.

Сире, Сталин юлташ, çапла шантарса калатпăр: пирĕн колхозсем кăçал вăрçă вăхăтĕнчи пек пысăк тухăçлă тырпул туса илччĕр тесе, обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем туччăр тесе тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем вăхăтра парса татчăр тесе, эпир хамăрăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр.

Ялти халăхăн пĕтĕм вăйне тыла тĕреклетме, фронта пулăшассине вăйлатма мобилизацилĕпĕр, тăшмана çĕнтерме мĕн кирлине паттăр Хĕрлĕ Çара пĕтĕмпех парса тăрăпăр.

Сывă пултăр пирĕн Тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ!

Сывă пултăр Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ, Аслă Октябрьте çĕнтерсе илнисене паттăррăн хӳтĕлекенĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учитель, социализм çĕршывĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховнăй Главнокомандующийĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

Мускав, Кремль

КАЛИНИН юлташа

Хаклă Михаил Иванович!

Эпир, Чăваш республикинчи ĕççынни депутачĕсен ялсовет исполкомĕсен председателĕсем, хамăрăн республикăри канашлăва пухăннăскерсем, Сире аслă Сталинăн шанчăклă соратникне, большевикла хĕрӳллĕ салам яратпăр.

Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă пирĕн умма, ялсовет работникĕсен умне, пысăк та ответлă задачăсем лартрĕ. Чăваш республикинчи колхозлă ялсенчи ĕççыннисем, Эсир тырпулпа аш-какай çар валли боеприпассем пекех кирлĕ тесе кăтартса панине асра тытса, хĕрӳллĕн, хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлерĕç, ылханлă тăшмана хирĕç кĕрешме мĕн кирлине тăван Хĕрлĕ Çара пĕтĕмпех парса тăчĕç. Пирĕн республикăри колхозсем, вырăнти советсем тӳрремĕнех ертсе тата пулăшса пынипе, иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Республика тырпул акăнакан çĕр лаптăкне вуншар пин гектар чухлĕ анлăлатрĕ, кашни гектартан вăтам шутпа 13,5 центнер тĕш тырă туса илчĕ, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарчĕ, государствăна тырă памалли плана срокра пурнăçа кĕртрĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, пирĕн ĕçĕн итогне хакласа, пирĕн республикăри колхозсемпе совхозсем уйхир ĕçĕсене лайăх туса ирттернине палăртрĕç. Пирĕн ĕçе çакăн пек пысăккăн хаклани пире ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешме хавхалантарать.

Эпир çуракине лайăхрах хатĕрленсе ирттерес, 1943 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илес ыйтăва сӳтсе-явма республикăри канашлăва пухăнтăмăр. Килес ялхуçалăх çулĕ чылай йывăртарах пуласси тата колхозлă хресченсен пĕтĕм вăйне мобилизацилеме ыйтнине эпир ăнланатпăр.

Партипе правительство пирĕн умма тырпул тухăçлăхне хăпартас, тĕштырăсемпе ытти ялхуçалăх культурисен пĕтĕм хисепне ӳстерес, уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса ирттерес, çуракине кĕске срокесенче туса ирттерес, вырăнти удобренисемпе пуринпе те пĕтĕмпех усă курас тата ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурт-кăпшанкăсемпе, çумкурăкĕсемпе кĕрешме пур ĕçсене те тăвас задача лартрĕç.

Эпир, хамăрăн çулпуçăн тата полководецăн, Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн историллĕ кăтартăвĕсемпе тата Сирĕн практикăллă кăтартусемпе хĕçпăшалланнăскерсем, Сире, хаклă Михаил Иванович, çапла шантарса калатпăр: партипе правительство лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесе, килес ялхуçалăх çулĕнче вăрçă вăхăтĕнчи пек пысăк тухăçлă тырпул туса илес тата ылханлă тăшмана хăвăртрах çĕнтерме мĕн кирлине хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пĕтĕмпех парса тăрас тесе, Чăваш республикинчи ĕççынни депутачĕсен вырăнти совечĕсем пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕç.

Сывă пултăр аслă Совет Союзĕ!

Сывă пултăр Совет стройне паттăррăн хӳтĕлекен пирĕн Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр Верховнăй Главнокомандующи, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!



Аслă писатель-патриот

Кăçалхи мартăн 28-мĕшĕнче пролетариатăн аслă писателĕ Алексей Максимович Горький çуралнăранпа 75 çул тултарчĕ.

М. Горький аслă писатель кăна мар, вăл ĕçхалăхне çĕнĕ тĕнче, коммунизм тĕнчи тума вĕрентекен аслă çын, пролетариат çулпуçĕсен — Ленинпа Сталинăн çывăх тусĕ пулнă.

Аслă художник Алексей Максимович хăйĕн ĕмĕрлĕхе юлнă вилĕмсĕр произведенийĕсенче вырăс халăхĕнчи лайăх шухăш-кăмăлĕсемпе туйăмĕсене палăртнă. Вăл, пур енчен те халăх массисемпе тачă çыхăнса тăнăскер, чăн-чăн халăх писателĕ пулнă. Вырăс халăхĕн аслă писателĕ çав вăхăтрах пĕтĕм этемлĕхĕн писателĕ те пулса тăрать.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ А. М. Горький уявĕнче унăн творчествине хакласа çапла çырнă: «Максим Горький ячĕ совет çĕршывĕнче, çавăн пекех унăн тулашĕнче те ĕçхалăхĕшĕн питĕ çывăх та питĕ хаклă. Мĕншĕн тесен вăл царизма хирĕç, капитализма хирĕç, пĕтĕм тĕнчери пролетари революцийĕшĕн, пур çĕршыври ĕçхалăхне капитализм пусмăрĕнчен хăтарассишĕн кĕрешекен çын пулнă».

А. М. Горький литература ĕçне пуçăннă вăхăтра шăпах ĕнтĕ Российăри пролетариат хăйне уйрăм вăй пулса çĕкленнĕ, Российăра революциллĕ парти пуçланса кайнă. Хăйĕн пирвайхи утăмĕсенчен пуçласах Горький революциллĕ пролетариатăн художникĕ пулнă. Вăл буржуазипе помещиксен обществинчи тискер пурнăçа хирĕç, этеме этем пусмăрланине хирĕç кĕрешнĕ, хăйĕн произведенийĕсемпе революциллĕ кĕрешĕве тухма, çĕнĕ тĕнче тума чĕннĕ, чĕнет те.

Литература ĕçне вăл 1892 çулта, Тифлисра тухакан «Кавказ» хаçатра «Макар Чудра» калав пичетлесе кăларнă хыççăн хутшăнать.

Революциллĕ движени анлăн сарăлнă вăхăтра А. М. Горький, литература ĕçĕпе пĕрлех, революци ĕçне те хастарлăн хутшăнать. 1905 çулта ăна «Январĕн 9-мĕшĕ» çинчен прокламаци çырнăшăн арестлеççĕ те Петропавловски крепоçа хупаççĕ. Крепоçран тухнă хыççăн вăл большевиксен пичетĕнче ĕçлет. 1906 çулта А. М. Горький ют çĕршыва тухса каять, Америкăна çитет, 1907 çулта РСДРП-ăн Лондонри съездĕнче делегат пулать. Çав вăхăтра вăл Ленинпа туслашать. Юмахсем, легендăсем, пĕчĕк калавсем çырассинчен Горький реализмлă повеçсем, романсем, пьесăсем çырасси патне куçать. Революциччен çырнă пысăк произведенисен шутне «Фома Гордеев» (1899 ç.), «Враги» пьеса (1906 ç.), «Мать» роман (1906—07 ç. ç.) т. ыт. те кĕреççĕ.

«Мать» роман Горькин революциччен çырнă произведенийĕсенчи чи палли. Вăл романра XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи Российăри пролетариатăн революциллĕ кĕрешĕвне тăрăнăн илсе сăнласа панă. «Мать» романра Горький Российăри рабочи класс идеологийĕ епле йĕркеленсе пынине, революциллĕ движение большевиксен партийĕ ертсе пынине, хĕçпăшаллă восстани урлă çеç пролетариат çăлăнăç тупма пултарассине кăтартса парать. В. И. Ленин вăл романа вуласа пысăк хак панă.

Октябрьти социализмлă аслă революци хыççăн А. М. Горький совет литературине ертсе пырас ĕçе хăй çине илет. Чирлĕ пулнă пирки унăн пĕр хушă ют çĕршывра пурăнмалла пулнă пулин те, чун-чĕрипе вăл яланах хамăр тăван çĕршывра. Ун патне кашни кунах темĕн чухлĕ çырусем çырса тăраççĕ. Вăл хăй те нумай çырать.

Октябрь хыççăн Горький палла та пысăк произведенисем çырать. Вăл шутра: «Дело Артамоновых» роман (1925 ç.), тăватă томлă эпопея «Жизнь Клима Самгина», пьесăсем — «Егор Булычев и другие», «Достигаев и другие» т. ыт. те çырать. Вăл произведенисенче Горький буржуази класĕ пĕтсе пынине, кивĕ общество ăшĕнче çĕнĕ, революциллĕ вăйсем шăтса тухса аталаннине сăнласа парать.

Художествăллă произведенисем çырнипе пĕрлех вăл тĕрлĕ статьясем çырса, Совет Союзĕн тулашĕнчи тата шалти тăшманĕсене, юнлă фашистсене, сăтăрçăсене питлет, кивĕ тĕнчене хирĕç, çĕнĕ, социализм йĕркишĕн кĕрешет. «Если враг не сдается, его уничтожают» ятлă хăйĕн статьинче вăл рабочи класа тăван çĕршыва хӳтĕлеме, — «хăйĕн историллĕ рольне» хӳтĕлеме чĕнет. Тепĕр статьинче вăл, пирĕн çĕршыв çине тăшмансем тапăнсан алла хĕçпăшал илсе тăшмана хирĕç çапăçăва тухасси çинчен çырса, ĕçхалăхне тăван çĕршыва хӳтĕлес тивĕçлĕх çинчен каласа парать. Хăйĕн ытти чылай статьисенче те вăл фашизмăн ирсĕр тискерлĕхне кăтартать, фашистсем социализм çĕршывне, революциллĕ пролетариата, ĕçхалăхне çав тери курайманни çинчен, вĕсем вăрçа хатĕрленни çинчен асăрхаттарса, сыхă пулма чĕнет.

Горькин пĕтĕм пурнăçĕ, творчестви, пĕтĕм ĕçĕ вăл социализмлă культурăшăн кĕрешни пулать.

Ирсĕр тăшмансем пирĕн Горькие курайман, вĕсем пролетариатăн аслă писательне, таса чĕреллĕ аслă гуманиста, Сталинăн çывăх тусне 1936 çулхи июнĕн 18-мĕшĕнче вĕлернĕ. Анчах Горькийĕн ĕçĕ вилĕмсĕр.

А. М. Горький тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ. Вăл çырнă произведенисем пирĕн халăха отечественнăй аслă вăрçăра хавхалантараççĕ, тискер тăшмана — нимĕç фашисчĕсене аркатса тăкас ĕçре пулăшаççĕ.

Канашлу дневникĕ

ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ канашлура тунă хăйĕн докладĕнче иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсене кăтартса пачĕ, кăçалхи çуракине хатĕрленсе ирттермелли задачăсем çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Мартăн 27-мĕшĕнче канашлу малалла пулса пычĕ, каçхине 6 сехетре хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ.

Матвеев юлташăн докладĕ тăрăх пренире тухса каласа, Калинино районĕнчи Айкăш ялсовет исполкомĕн председателĕ Ананьев, Çĕрпӳ районĕнчи Туçа ялсовет исполкомĕн председателĕ Александров, Елчĕк районĕнчи Янтиково ялсовет исполкомĕн председателĕ Овчинников, Канаш районĕнчи Асхва ялсовет исполкомĕн председателĕ Щипцова, Вăрнар районĕнчи Мамалай ялсовет исполкомĕн председателĕ Юлмасов юлташсем хăйсем ĕçлекен ялсовет исполкомĕсем колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре мĕнле ертсе пыни çинчен каласа пачĕç.

— Иртнĕ çулта М. И. Калинин юлташ ялсовет исполкомĕсен председателĕсем патне янă çырăва тĕпе хурса, пирĕн ялсовет исполкомĕ çуракине туса ирттерес ĕçе пĕтĕм вăя мобилизацилесе ĕçлерĕ, — тет Асхва ялсовет председателĕ Щипцова юлташ. — Чи малтанах эпир колхозсенче ĕç дисциплинине çирĕплетрĕмĕр, хĕрарăмсем ĕçре тĕп вырăн йышăнмаллине шута илсе ачасем валли яслисемпе площадкăсем уçрăмăр, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантару ĕçне çĕнетсе вăйлатрăмăр. Çакă вара колхозниксен пĕтĕм массине çĕклесе ĕçе лайăх организацилесе пыма май пачĕ. Ĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ. Халăх вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлерĕ. Мирлĕ вăхăтра çулсерен 70-шер ĕçкунĕ туса пынă хĕрарăмсем 300—350-шер ĕçкунĕ турĕç.

Канашлура Кувакино районĕнчи Сыреç ялсовет исполкомĕн председателĕ, отечественнăй вăрçă инваличĕ Учаев юлташ хăй ертсе пыракан ялсовет исполкомĕ вăрçă вăхăтĕнче мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕ.

— Ялсовет исполкомĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçне план тăрăх туса пырать. Çуракине хатĕрленес ыйтупа эпир тăтăшах интересленетпĕр, колхозсене çак ответлă ĕçре ертсе пыратпăр. Ялсовет исполкомĕн ларăвĕсенче колхоз председателĕсен, бригадирсен ĕçĕ çинчен итлесе кăтартусем пана. Ялсоветăн чылай депутачĕсем халĕ фронтра. Анчах эпир актива пĕтĕçтернĕ, пĕтĕм ĕçе вĕсемпе таччăн çыхăнса туса пыратпăр.

Малалла пренире Пăрачкав ялсовет исполкомĕн председателĕ Рязанова, Улатăр районĕнчи Иваньково ялсовет исполкомĕн председателĕ Китаев, Йĕпреç районĕнчи Епеç ялсовет исполкомĕн председателĕ Муравьева тата Ишуткин (Куславкка), Галифуллин (Елчĕк), Данилова (Октябрьски), Львов (Красноармейски), Демянов (Шупашкар районĕ) юлташсем тухса каларĕç. Фронтовиксен çемьисене пулăшас енĕпе ялсовет исполкомĕсем умĕнче тăракан задачăсене палăртса канашлура ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ Киреев юлташ сăмах каларĕ.

Канашлу Совет Союзĕн Маршалĕ аслă Сталин юлташ патне яма çырнă çырăва пĕр шухăш-кăмăлпа тăвăллăн ала çупса йышăнчĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. Андреева юлташ пирĕн республикăри малта пыракан ялсовет исполкомĕсен паха опычĕсемпе паллаштарчĕ.

Ялсовечĕсем хăйсен задачисене пурнăçа кĕртсе пырасси, — тет Андреева юлташ, — вăл чи малтан ялсовет председателĕсем хăйсем тавра ялти учительсен, колхозниксемпе колхозницăсен анлă активне пĕтĕçтернинчен, яланах ĕçлекен комиссисем хăйсен ĕçне активпа пĕрле туса пынинчен килет.

Малалла Матвеев юлташăн докладĕ тăрăх пренире Егорова (Çĕрпӳ районĕ), Соловьева (Улатăр районĕ), Мокеев (Советски районĕ), Леонтьева (Сĕнтĕр районĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Юлашкинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ. Чарыков юлташ, ялсовет исполкомĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртса, ялсовет председателĕсем умĕнче вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракинче пысăк та ответлă задачăсем тăни çинчен аса илтерчĕ.

— Вăрçă ялхуçалăхĕнчен, мирлĕ вăхăт пек мар, ытларах ыйтать. Çакăнпа пĕрлех вăй-питти çынсем фронта кайнă пирки, туртăм вăйĕн халĕ фронтшăн нумай ĕçлеме тивнĕ пирки, ялхуçалăхĕнче йывăрлăхсем ӳсрĕç. Анчах темĕнле йывăрлăхсем пулсан та, эпир вĕсене çĕнтеретпĕр.

Канашлу участникĕсем СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ патне яма çырнă çырăва ăшшăн хавхаланса йышăнчĕç.

Ялсовет исполкомĕсен председателĕсен республикăри канашлăвĕ вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракинче пурнăçа кĕртмелли конкретнăй задачăсене палăртса решени йышăнса хăварчĕ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Мартăн 26-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Мартăн 26-мӗшӗнче пирӗн войскăсем малтанхи енелле çапăçса пынă.

* * *

Мартăн 25-мӗшӗнче фронтӗн тӗрлӗ участокӗсенче пирӗн авиаци часӗсем нимӗçсен войскисене туртарса пыракан тата грузсем тиенӗ 100 автомашинине çити пӗтерсе тăкнă е сиенленӗ, боеприпассен 2 складне сирпӗтсе янă, полевой тата зенитлă артиллерин 5 батарейине пусарнă, тăшманăн чугунçул составне аркатса тăкнă.

* * *

Хӗвеланăç фронтӗнче пирӗн войскăсем уйрăм участокӗсенче хăйсем йышăннă позицисене лайăхлатассишӗн çапăçнă. Пӗр участокра боецсем тăшман оборонин вăйлă тӗреклентнӗ икӗ пунктне йышăнса илнӗ. Çавăнта пулнă çапăçусенче нимӗçсен 200 ытла салтакне офицерне пӗтерсе тăкнă. Тăшманăн 4 орудине, 20 пулеметне, 5 противотанковăй пăшалне тата ытти трофейсене те тытса илнӗ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирӗн часӗсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнӗ. Пӗр участокра нимӗçсен оборонин тӗрекленӗ вăйлă узелӗ тухса тăнă халăх пурăнакан пӗр пунктшăн çапăçнă. Петренко юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсен тăвата ушкăнӗ вăрман витӗр тухса шыв урлă каçнă та нимӗçсен хыçне пырса тухнă. Сигнал тăрăх Совет боецӗсем гитлеровецсене тылран пырса тапăннă. Тăшман вутлă хушăран тухма темӗн чухлӗ хăтланни те ахалех пулнă. Тăшманăн 300 салтакпа офицера яхăн шутланакан гарнизонне пӗтӗмпех пӗтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнӗ.

* * *

Белгород районӗнче пирӗн чаçсем нимӗç батальонӗ танксем пулăшнипе совет войскисен хушшине савалланса кӗрсе кайма хăтланнисене сире-сире пăрахнă. 100 гитлеровеца ытла вӗлерсе тăкнă тата нимӗçсен 2 танкне çунтарса янă. 4 пулемет тата 3 миномет тытса илнӗ.

* * *

Чугуевран çурçӗртерехре пирӗн войскăсем тăшманăн пехотипе танкӗсем тунă темиçе атакăна сире-сире пăрахнă. Икӗ кун хушши пынă çапăçусенче пирӗн пӗр танковăй часть нимӗçсен 42 танкне тата тăшман пехотин пӗр батальонне çити пӗтерсе тăкнă. Пӗр паллă высотăшăн хаяр çапăçусем пынă. Пур тӗрлӗ хӗçпăшалсенчен персе, пирӗн боецсем гитлеровецсен тăватă атакине сирсе янă, хăй тӗллӗн çӳрекен 2 орудие, минометсен батарейине тата нимӗçсен пехотин пӗр ротине çити пӗтернӗ.

* * *

Киев облаçӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ мартăн 1-мӗшӗпе 20-мӗшӗ хушшинчи вăхăтра пулнă çапăçусенче нимӗçсен фашистла оккупанчӗсене 380 çынна пӗтерсе тăкнă. Пулеметсем, автоматсем, винтовкăсем, патронсем нумай тытса илнӗ. Çав вăхăт хушшинчех партизансем 12 кӗпере сирпӗтсе янă тата тăшманăн çар эшелонне ӳпӗнтерсе янă. 34 вагонпа платформăна аркатса тăкнă. Крушени вăхăтӗнче темиçе вуншар гитлеровец вилнӗ е аманнă.

* * *

Нимӗçсен 58-мӗш дивизийӗнчи 220-мӗш полкăн хăй ирӗкӗпе тыткăна парăннă салтакӗ Рихард В. çапла калаçса панă: «Февраль уйăхӗн вӗçӗнче Псковри çар тӗрминче пирӗн полкри 30 салтака персе пăрахнă. Çав салтаксем ыттисемпе пӗрле вырăссен енне хӗçпăшалпах куçасшăн пулнă. Вырăссен енне куçма палăртнă кун вӗсем çинчен тахăшӗ обер-лейтенанта пӗлтернӗ. Арестлеме пуçланă. 17 çын тарса пытанма ӗлкӗрнӗ, ыттисене хӗçпăшалсăрлатса Псков тӗрмине ăсатнă. Персе пăрахнисем хушшинче 19 поляк, 9 нимӗç, пӗр француз (Эльзасран) тата пӗр чех».

* * *

Нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем Сево ялӗнчи (Ленинград облаçӗ) мирлӗ халăха тискеррӗн асаплантарнă. Фашистла бандитсем 40 колхознике персе пăрахнă, вӗсем хушшинче хӗрарăмсемпе ачасем нумай пулнă. Гитлерла тискерсем Васильев колхозникӗн 9 çынлă çемьине, çавăн пекех Капитонов тата Михайлов колхозниксен çемьисене вутра çунтарса янă.

* * *

Туль хулинчен (Франция) инçе мар ирӗклӗ стрелоксем нимӗç отрядне тапăннă. Пуçланса кайнă çапăçусенче 28 гитлеровеца вӗлернӗ е амантнă. Омикурта Франци патриочӗсем нимӗçсен çар материалӗсем тиенӗ эшелонне сирпӗтсе янă.

Çуракине хатӗрленсе çитнине тӗрӗслес умӗн

ЕЛЧЕК, мартăн 27-мӗшӗ. (Телефонпа). ВКП(б) Обкомӗн юлашки пленумӗ кăтартса панă тăрăх, апрелӗн 1-мӗшӗнчен пуçласа колхозсем çуракине хатӗрленсе çитнине тӗрӗслесе тухмалла. Тӗрӗслӳ пуçланиччен кашни колхоз çуракине тӗплӗн хатӗрленсе çитме тăрăшать.

Вăрлăх хатӗрлес енӗпе хӗрӳ ӗç пырать. Колхозсем пӗр-пӗрне вăрлăхпа пулăшасси анлăн сарăлчӗ. К. Маркс ячӗпе тăракан колхозăн вăрлăх сахал пулнă. Колхоз правленийӗ кӳршӗри колхозсенчен ыйтрӗ. Кӗске вăхăт хушшинчех Ворошилов ячӗпе тăракан колхоз К. Маркс колхоза 200 центнер вăрлăх кивçен парчӗ. Çавăн пекех тата «Ким» колхоз 100 центнер вăрлăх пырса пачӗ.

Районри пур колхозсем те акмалли вăрлăхсене пӗрремӗш хут шăтарса пăхнă. Халӗ иккӗмӗш тӗрӗслӳ пырать. Вăрлăхсен пахалăхне татах тепӗр хут тӗрӗслеççӗ. Паянхи куна районри 20 колхоз хăйсен акма уйăрнă тыррисене иккӗмӗш хут тӗрӗсленӗ. Пӗтӗмӗшпе илсен, кăçал çуракинче акмалли тырăсен вăрлăхӗ паха кондициллӗ.

П. Щипцов.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

7. Чăваш ачин çулӗ

Чăваш ачи, сассуна пар!

Çеçпӗл Мишши.

Хăватлă марш. Вӗçевçӗсем маттур
«Чӗремӗр пирӗн çулăмлă мотор...»
Шкултан тухса çӗн ӗмӗт-шанчăкпа
Орлов вӗçет бомбардировщикпа.
Тăват мотор, ик сарлака çунат, —
Тăван çӗршыв ăна ыр çул сунать.
Хăюллă çул, инçе те çӳллӗ çул, —
Çав çул çинче эс пысăк паттăр пул!
Çав çулпала эс ирӗклӗн çӳре.
Эс ху хуçа çак аслă тӗнчере.

Орлов вӗçет. Çуралнă вăл вӗçме.
Пӗр вӗçӗнчен тухать тепӗр вӗçне.
Енчен енне виçет çӗршывăма,
Ӗмӗтленет çӗнӗ çулсем хывма.
Вăл кăнтăрти хӗвелпеле васкать
Çитме часрах пăрланнă Мурманска.
Шур çӗлӗклӗ мухтавлă Кавказа
Вăл урлă-пирлӗ çичӗ хут каçать.
Пăрпа та, çăмăрпа та çапăçать,
Балтикăран тухать вăл Тухăçа.

Вăл Ази урлă вӗçнӗ чух пӗр ир,
Кӗтсе илет ăна тăван Памир.
Малтанхи хут кунта вăл—аякра —
Курăнăçать хăй ăмăрткайăкпа.
— Аван-и, тусăм, ӗмӗтри тăван?
Мӗнле пурăнан, ăçта эс çул тытан?
Хăй аслă кайăк тем ăнланнă пек
Варкăштарать хăлаç çунаттипе.
Юласшăн мар паян вăл намăса,
Орловпала вӗçет вăл ăмăртса.

— Вӗç, вӗç, хăватлă тусăмçăм, кӗрле!
Çитес çӗре часрах çитер пӗрле.
Хастаррăнрах эс сывлăша кассам,
Пире чӗнет юнпа вӗрен Хасан.
Вут çулăм хыпнă çапăçу хирне
Пире тăван çӗршывăмăр чӗнет.
Анчах та ăмăрткайăк пит хуллен
Вӗçет, сынпа ăмăртаймасть иккен,
Ырă сунса çунаттипе сулать,
Вăл Орловран инçе тăрса юлать.

— Сывпул эппин, эс сывлăшри тăван.
Çӗнтерӳпе эп таврăнăп ыран.
Сан чыслăхна та санăн йăвуна,
Эп, тусăм, памăп сӗмсӗр тăшмана.
Сывпуллашса вӗçевçӗ ăсанать
Çапла хӗрӳллӗ, юнлă Хасана.
Çитес çӗре çитет те вăл ирех
Харсăрланса çапăçăва кӗрет.
Тăшман çине вăл вилӗм çеç ярать,
Çапла чăваш хăй сассине парать.

Çапла вăл малтанхи çапăçура
Хăйӗн вăйне тӗрӗслесе курать.

Тепӗр çултан ун йывăр та шултра
Бомбийӗсем ӳкеç Халхин-Голра.
Сыхлать Орлов тăван çӗршыв чысне
Вăл шанчăклăн тăвать хăйӗн ӗçне.
Ăçта Орлов пырса çапать хастар,
Унта вара тăшманшăн пурнăç мар.
Ăçта Орлов юррийӗ илтӗнет,
Унта çӗршывăн чапӗ çӗкленет.

Иртеç кунсем. Тăван çӗршыв тавра
Тӗнче вăрçи тискер çилне çаврать.
Орлов васкать Хӗвеланăçнелле,
Çитес çӗре татах ун çитмелле.
Ун вӗçмелле питех те аякка,
Татах курать вăл ăмăрткайăка.
Варкăштарса хăлаç çунаттипе
Леш саламлать ăна çӗнтерӳпе:
— Салам сана, çут çăлтăрлă çунат,
Тупнă çулна нихçан та ан çухат.

Тусӗпеле сывпуллашса хавас,
Орлов васкать. Ун чӗринче приказ.
Çут тӳпере мăнаçлăн кӗрлесе,
Пӗр тикӗссӗн ӗçлеççӗ моторсем.
Çунат çинче ик çăлтăр çӗклесе,
Орлов вӗçет. Чӗнеççӗ тăвансем.
Аван чухлать вăл — ирӗклӗх мӗскер,
Чăваш ачи, хăй мăшкăл тӳснӗскер.
Çампа вăл ăмăрткайăк пек çӳрет.
Тăвансене телейпе чыс кӳрт.

Çав кӗркуннех, пӗр тӗксӗм каçхине,
Тăшман сикет тăван çӗршыв çине.
Орлов васкать. Вӗçет Çурçӗрелле.
Тăшман усал. Ăна пӗтермелле.
Орлов хаяррăн бомбăсем тăкать,
Тăшман чăмать пуç-хӗрлӗ шăтăка.
Белофинсем вара çавăн чухнех
Хыпса ыхаç Орлов кучченеçне.
Çапла, çав сулхăн Çурçӗрте вара
Чăваш татах хăй сассине парать.

Орлов вӗçет. Татах çулсем хывать.
Унпа çӳрет вут-çулăмлă хăват.
Çут тӳпере мăнаçлăн кӗрлесе,
Пӗр тикӗссӗн ӗçлеççӗ моторсем.
Çӗршывăма чыспа мухтав кӳрсе,
Çунатсенчен çиçеççӗ çăлтăрсем.
Вăл Балтика таврашӗнче вӗçет;
Ăçта çитет, унта телей çитет.
Часах Эстони — Латви — Литвара
Чăваш ачи хăй сассине парать.

Часах хӗн-хӳрлă Бессарабире
Сынсем кӗтсе илеççӗ çут ире.
Орлов унта хăй çунатти çинче
Илсе пырать телейлӗ çӗн тӗнче.
Аван чухлать вăл—ирӗклӗх мӗскер,
Чăваш ачи, хăй мăшкăл тӳснӗскер,
Çампа вăл ăмăрткайăк пек çӳрет,
Тăвансене телейпе чыс кӳрет.
Чăваш ачи ăçта вӗçсе пырать,
Унта вăл хăй сассине парать.

(Малалли пулать).

Малалли. Поэма 61-мӗш номӗртен пичетленме пуçланă.

Май уявӗ умӗнхи социализмлă ăмăрту

ПЛАНА ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРНĂ

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Шупашкарти макарон фабрикин коллективӗ март уйăхӗнчи программăна срокчен пурнăçлама обязательство илнӗччӗ. Верховнăй Главнокомандующи Сталин юлташ приказӗпе хавхаланса ӗçлесе, фабрика коллективӗ ӗç тухăçлăхне ӳстерессишӗн, ӗç нормисене иртте рсе тултарассишӗн тата продукци пахалăхне лайăхлатассишӗн вăйлăн кӗрешрӗ.

Май уявӗ умӗнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнӗ обязательствăна макарон фабрикин коллективӗ срокчен пурнăçа кӗртрӗ. Мартăн 25-мӗшӗ тӗлне фабрика планран иртте рсе 54 тонна макарон туса кăларчӗ. Фабрика продукци пахалăхне те чылай лайăхлатрӗ, лайăх пахалăхлă макарон нумай туса кăларчӗ. Продукци хакӗпе шутласан, фабрика март уйăхӗнчи плана 224 процент ытла тултарчӗ.

Социализмлă ăмăртура уйрăмăнах Терушина, Тарасова, Яковлева, Денисова, Лукоянова работницăсем лайăх ӗçлерӗç. Вӗсем кашниех производство заданине 200 процентран ирттерсе тултарчӗç. Çавăн пекех Архипова, Борисова, Малова, Афанасьева юлташсем те лайăх ӗçлерӗç. Вӗсем ӗç нормине 135 процентран пуçласа 190 процент таран тултарнă.

Планран ирттерсе туса кăларнă пӗтӗм продукцие фабрика коллективӗ Главнăй Командованин уйрăм фондне парать.

Макарон фабрикин директорӗ **Столяров.**

ХУЛАНА ТАСАТАР

Шупашкар хулине тасатас тӗлӗшпе ӗçлекен Правительство комиссийӗ палăртнă тăрăх, Горисполкомăн мартăн 3-мӗшӗнче йышăннă решенийӗ пурнăçа кӗмен. Предприятисемпе учрежденисен руководителӗсене пурте усă курмалли вырăнсене, предприятисемпе учрежденисен тата çуртсен территорийӗсене, урамсемпе площадьсене массăллăн тасатма хушнă.

Мартăн 26-мӗшӗ тӗлне тӗрӗслесе пăхни çакна кăтартса панă: Топливо промышленноçӗн управленийӗ хăйӗн картишне, тула тухмалли вырăнне тата тасамарлăх тăкмалли шăтăкне пӗтӗмпех тасатнă, тасамарлăха турттарса кайнă. Çавăн пекех водниксен çуртӗ те хăй таврашӗнчи тасамарлăха пӗтӗмпех тасатса турттарса тухма хатӗрленӗ (руководителӗ Валатин юлташ). Тасамарлăха тасатас тата турттарса каяс ӗçе Сăра заводӗ (руководителӗ Быков юлташ), Пир-авăр фабрики (директорӗ Наумова юлташ), Столовăйсен трестӗн ача-пăча столовăйӗ, Колхозник çуртӗ, «Кожупряжь» артелӗ, Ялхуçалăх институтӗ (директорӗ Калинцев юлташ), Стройтрест, 10-мӗш номерлӗ домоуправлени т. ыт. те тытăннă.

Çав хушăрах Шупашкар хулине санитари тӗлӗшпе кирлӗ пек йӗркелесси çинчен правительство йышăннă решение уйрăм руководительсем пурнăçламан. Сăмахран, Горпромкомбинат управляющийӗ Григорьев хăйӗн предприятийӗсем вырнаçнă территорие тасатас тӗлӗшпе нимӗн те туман çеç мар, атăпушмак юсакан мастерскойӗ вырнаçнă çӗрти тасамарлăха тасатнăшăн тӳлеме пӗр пус укçа та парасшăн пулман.

Хулана тасатас ӗçе чарса пыракан айăплă çынсене ответ тыттарăççӗ. Сăмахран, пӗр заводри топливо пайӗн бригадирне Е. Г. Морозова, пӗр заводри АХО начальникне Бондаре уголовнăй йӗркепе ответ тыттарма ӗçе следстви органӗсене панă. Волгострой çурчӗсен коменданчӗсене Шарцевпа Перковăна, мехлесопункттăн столовăй заведующине Сибагатулина, Кооперации шкулӗн директорне Мусатовăна административлă йӗркипе айăпласа взыскани сем панă. Хăшпӗр учрежденисемпе комендантсене килхушшинчи тата кил çывăхӗнчи вырăнсене таса тытма кирли çинчен çирӗп асăрхаттарнă т. ыт. те.

Лихачев,

Правительство Комиссийӗн Председателӗ.

ТАСАЛĂХ ВОСКРЕСНИКӖ

Правительство комиссийӗ йышăннă тăрăх, паян, мартăн 28-мӗшӗнче, Шупашкар хулине массăллăн тасатмалли воскресник пулса иртет.

Предприятисемпе учрежденисен тата коммунальнăй çуртсемпе уйрăм çуртсен территорийӗсене тата вӗсен çывăхӗнчи урамсемпе площадьсене тасатас ӗçе ӗç повинноçӗ йӗркипе пурне те — ӗçлеме пултаракан пӗтӗм халăха хутшăнтарăççӗ.

Çак решение пăхăнман çынсене суда парса айăпласси таранах çирӗп ответ тыттарăççӗ.

Ют çӗршывсенче

АНГЛИ РАБОЧИЙӖСЕМ ИККӖМӖШ ФРОНТ УÇМА ЫЙТАÇÇӖ

ЛОНДОН, мартăн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пӗлтерет: çар заводӗсенче ӗçлекен темиçе çӗр çамрăк рабочисемпе работницăсем паян общинăсен палатин çуртне пынă. Вӗсем унта парламент членӗсемпе тӗл пулнă, вӗсем иккӗмӗш фронта хăвăртрах уçма ыйтнă.

ЛОНДОН, мартăн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Общинăсен палатине ӗнер пынă депутатсен шутӗнче, официальнăй йӗркепе пӗлтернӗ тăрăх, 317 делегат пулнă. Вӗсене рабочисен тӗрлӗ организацийӗсем уйăрса янă е хăшпӗр предприятисенчи рабочисен пухăвӗсенче суйланă. 90 ытла суйлав округӗсенчен 94 организацисен представителӗсем пулнă. Çав делегатсем пӗтӗмпе 247 пин çын ячӗпе пынă. Çав депутаципе пӗрлех палатăна рабочисен ытти организацийӗсен представителӗсем те нумай пынă. Палатăна пынă делагатсен хисепӗ 600 çынна çитнӗ.

Делегатсем хушшинче (предприятисенчи рабочисемпе пӗрлех) гражданла самооборона членӗсем, муниципалитет служащийӗсем, килхуçи хӗрарăмӗсем тата ытти те пулнă.

СТРАБОЛДЖИ ИККӖМӖШ ФРОНТ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, мартăн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Лейборист лорд Страболджи мартăн 24-мӗшӗнче Винчестерта сăмах тухса калаӗ. Нимӗçсем Донец патне тепӗр хут çитни тата Харьковăн иккӗмӗш трагедийӗ Англипе Америкăна хыттăн асăрхаттарни пулать, тенӗ вăл. Хӗвеланăç Европăран Российăна Гитлер 22 дивизи çӗнӗрен куçарни пӗрлешӳллӗ нацисен çар ӗçне, Вашингтонпа Лондонри ертсе пыракан çынсене хӗрӳллӗн ӳпкелени пулать. Пирӗн, тенӗ Страболджи, Европа материкӗ çинче наступлени тăвасси çинчен тахçанах панă сăмаха пурнăçламалла ӗнтӗ. Кăçал нимӗçсене аркатса тăкас тӗлӗшпе тăвас вăрçă кампанийӗ ăнăçлă пулма пултарать. Англи халăхӗн виçӗ пайӗнчен пӗри Германи захватчикӗсен аллинче пулнă пулсан, вăрçă 1944 çулта е 1945 çулта пӗтесси çинчен эпир хальхин пек лăпкă калаçмăттăмăр.

Пӗтӗмӗшле мир тумалли тата виççӗмӗш вăрçа, кунтан та хăрушăрах вăрçă кăлармалла мар тумалли кирек епле система та Англие, США-на тата СССР-а пӗр-пӗрне ăнланса тачăн çыхăнса ӗçлеме ыйтать. Пулас агрессора хăратса тăма çав виçӗ державăн анчах индустриллӗ хăват тата çар вăйӗ пур.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ТĂШМАН ОККУПАЦИЛЕНӖ ÇӖРШЫВСЕНЕ АПАТ-ÇИМӖÇ ЯРАССИНЕ ХИРӖÇ

ЛОНДОН, мартăн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тăрăх, Англин экономикăллă вăрçă министерствин парламентри секретарӗ Фут общинăсен палатинче сăмах тухса каланă. Хăйӗн сăмахӗнче вăл çапла каланă: Бельги правительстви тыткăна лекнисемпе ытти çынсем валли Америкăн апат-çимӗçӗпе сӗт порошокне тиенӗ парохода — Хӗрлӗ Хӗрес обществин пароходне — Бельгие яма ыйтнăччӗ. Вăл ыйтнине халь сирсе янă, тенӗ. Фут çапла каланă: «Тăшман оккупациленӗ çӗршывсене апат-çимӗç таврашӗ ярасси Англипе Америка правительствисен политикине хирӗç пынине пула, эпир пӗле-тăркачах çавăн пек япаласем тума ирӗк памăпăр». тенӗ.

СОВЕТ СОЮЗӖПЕ ГЕРМАНИ ФРОНТНЕ КАЯКАН «ДОБРОВОЛЕЦСЕМ» ГРЕЦИРЕ ТУПĂНМАН

СТАМБУЛ, мартăн 26-мӗшӗ. (ТАСС) Кунта илнӗ пӗлтерӳсем тăрăх, Грецире «большевиксене хирӗç» кӗрешме Совет Союзӗпе Германи фронтне ярас шутпа легион пухма хăтланни путланса ларнă. Афинăри университетра, «добровольцсем» пухас кампани темиçе уйăх пынă пулин те, легиона пӗр студент кăна çырăннă. Çавăн пирки вăл сутăнчăка хăйӗн юлташӗсем хытă хӗнесе тăкнă. Çав студент студентсем хушшинче урăх курăнман вара.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ӖÇӖСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Официально пӗлтернӗ тăрăх, саккăрмӗш çар кӗрешекен районра Англи пехоти пăртак малалла куçса хăйӗн позицийӗсене лайăхлатнă. Гафса тата Макпасса секторӗсенче вăйлă мар çапăçусем пулса иртнӗ. Тăшман темиçе хут та атакăсем тукаласа пăхнă. Çурçӗрти сектортa çапăçусем пăртак хӗрӳленнӗ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙӖ МЕССИНĂНА ТАПĂННИ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Мартăн 24-мӗшӗнче кăнтăрла Америка бомбардировщикӗсем Мессина çине (Сицилия) вӗçсе пырса тапăннă. Пырса тапăннине пула чугунçул склачӗсем çунма пуçланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

П Ӗ Л Т Е Р Ӳ

СССР Государство банкӗн Чăваш республикинчи Контори халăха çакă çинчен пӗлтерет: Госбанкăн отделенийӗсем пур гражданлсенчен те яглă укç вклачӗсем йышăнаççӗ.

Вкладсене Государство Банкӗн отделенийӗсем йышăнаççӗ, вкладăн сумми 3.000 тенкӗрен кая пулмалла мар. Вклад хывнă хыççăн хывакан укçасене вара кирек мӗн чухлӗ пулсан та йышăнаççӗ.

Владчиксем хăйсен вклачӗсене хăйсен ирӗкӗпе тыткалаççӗ. Вкладчик хăйӗн вклачӗ тăрăх укçа пӗтӗмпех е пӗр пайне ыйтсанах, ăна вклад кӗнекине кăтартсан укçа параççӗ.

Государство Банкӗ вкладсем çинчен никама та пӗлтермест. Вкладсем çинчен никама та пӗлтермелле мар йӗркене пăснăшăн Государство Банкӗн работникӗсене Уголовнăй йӗркепе ответ тыттараççӗ.

Вкладсене никам та тӗкӗнме пултараймасть. Суд органӗсем тата Уголовнăй ӗçсене йӗркелекен следстви органӗсем постановлени йышăнмасăр вкладсене арестлеме е вӗсенчен укçа шыраса илме юрамасть.

Вкладсене çакăн пеккисене йышăнаççӗ:

а) ыйтсан памалли вклад; ун тăрăх укçа (пӗтӗмпех е пӗр пайне) кирек хăш вăхăтра та параççӗ;

б) сроклă вклад; ăна 6 уйăхран кая мар срока йышăнаççӗ;

в) условиллӗ вклад; ăна укçа хывакан çын кăтартса панă условисем килсе çитсен çеç тыткалама юрать;

г) тӗллевлӗ вклад; ăна вкладчик хăй кăтартнă тӗллев валли хывать.

Вкладчик дохода процент халлӗн илет: ыйтсан памалли вклад тăрăх тата условиллӗ, тӗллевлӗ вкладсем тăрăх çулталăкне 3%, сроклă вклад тăрăх 5% тӳлеççӗ.

Вклад тăрăх кӗрекен доходран тата наследство йӗркипе куçакан вкладран налогсем илмеççӗ.

Вкладчик хăйӗн вкладне хăйӗн законлă наследникӗсене çеç мар, кирек кама та, кирек мӗнле организацие те халалама пултарать.

Вкладчик хăйӗн вкладӗнчи укçана Государство Банкӗ урлă хăйӗн ячӗпе е ытти çын, учреждени е организаци ячӗпе Госбанкăн кирек хăш отделенине те куçарма пултарать.

3—1

СССР Госбанкӗн Чăваш республикинчи Контори.

Шупашкарти энергетика техникумӗ (ӗлӗк Строительный техникум пулнăскер) I-мӗшпе II-мӗш курссене вӗренме çӗнӗрен пухасси çинчен пӗлтерет

Техникум хуласенчи электростанцисемпе электросеть валли техник-электриксем тата механиксем хатӗрлет. Техникумра 3 çул та 4 уйăх вӗренмелле. 15 çултан пуçласа 30 çула çитнӗ арçынсемпе хӗрарăмсене илеççӗ, производствăран уйăрса вӗрентеççӗ.

1-мӗш курса çак специальноçсем тăрăх илеççӗ: 1) техник-электриксем тата 2) дизельнăй установкăсене эксплоатацилекен механиксем. II-мӗш курса—дизельнăй установкăсене эксплоатацилекен механик специальноçӗпе илеççӗ.

Заявленисене апрелӗн 10-мӗшне çитиччен йышăнаççӗ. Заявленисемпе пӗрле çакăн пек документсем тăратмалла: а) автобиографи, б) туллимар вăтам шкултан вӗренсе тухни çинчен калакан свидетельство, в) виçӗ фотокарточка (çара пуçăн ӳкерни пулмалла), г) хăçан çураланине ӗнентерекен свидетельство, д) сывлăха пӗлтерекен справка, е) хăйпе пӗрле паспорт пулмалла.

1-мӗш курса 1940—41-мӗш тата 1941—1942-мӗш вӗренӳ çулӗсенче туллимар вăтам шкултан „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вӗренсе тухнисене тата çич çул вӗреннӗ отечественнăй вăрçă инвалидӗсене испытанисӗрех илеççӗ. Ыттисене вырăс чӗлхипе, математикăпа, физикăпа тата СССР Конституцийӗпе испытанисем тыттараççӗ II-мӗш курса вăтам шкулăн 8—9-мӗш класӗсенчен „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вӗренсе тухнисене испытанисӗрех илеççӗ. Вӗсен вара 1 мӗш курсра вӗреннӗ специальнăй дисциплинăсем тăрăх 1-мӗш семестр хушшинче испытани тытмалла пулать.

Туллимар вăтам шкултан отлично вӗренсе тухнисене тата отечественнăй вăрçă инвалидӗсене стипенди параççӗ. Техникума йышăннисем валли столовăй тата общежити пулать. Вӗреннишӗн икӗ срокра çулталăкне 150 тенкӗ тӳлемелле. Пенсионерсен ачисене, пенсионерсене, военнослужащисен ачисене, çавăн пекех тата отечественнăй вăрçă инвалидӗсене вӗреннишӗн тӳлеттермеççӗ. Испытанисем апрелӗн 11-мӗшӗнче пуçланаççӗ. Заявлени панисен уйрăм çырса пӗлтерессипе кӗтмесӗрех çав вăхăт тӗлне килмелле. Занятисем апрелӗн 15-мӗшӗнче пуçланаççӗ Заявленисене çак адреспа ямалла: Шупашкар, Калинин урамӗ, 3-мӗш номӗрлӗ шкул çуртӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарӗн—4—26, промышленность пайӗн—3—99, ялхуçалăх пайӗн—5—31, издательство конторин—0—23.